27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АВГУСТ
12
ШАМАТКУН
158(6653) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Кĕракине кăтартуллăн туса ирттерер

Республикăри колхозсенче кĕраки пуçланчĕ. Виçĕмкунпа ĕнер уйрăм районсенче вуншар та çĕршер гектар акнă та ĕнтĕ. Акана Вăрнар, Елчĕк, Çĕрпӳ, Вăрмар, Красноармейски районсенчи колхозсем ыттисенчен чылай йĕркелленрех тытăнчĕç. Ку ĕнтĕ, паллах, çак ĕçе туса ирттерме тĕплĕн хатĕрленнинчен килет.

Килес çул кăçалхинчен те вăйлăрах тырпул туса илме, тăван çĕршыва пуян апат-çимĕç пама тата колхозниксен пурнăçне те ытларах лайăхлатма ĕмĕтленекен колхоз руководителĕсем кĕрхи тырăсене тĕплĕн акса хăварма тăрăшаççĕ. Çав вăхăтрах килес çул çинчен сахал шухăшлакан, малалла курма пĕлмен çынсем кĕраки ĕçĕ çине сӳрĕккĕн пăхса лараççĕ. Акă, Комсомольски районри Урмаел ялсоветĕнчи виçĕ колхозĕ те çĕртме туса пĕтермен, вĕсен уйхирĕсенче çын сӳллĕш арăмути кашласа ларать. Çавăн пекех çав районри Çĕрпӳел ялсоветне кĕрекен «Культура» колхозăн та çĕртме тумалли тата 50 гектар юлнă. Унта МТС-ăн икĕ тракторĕ ĕçлет, анчах колхоз лашасене çĕртме тунă çĕре кӳлмен. Халиччен сухаланă çĕртме пуссине те çумкурăк пусса илнĕ, ку ĕнтĕ ăшăх сухаланине кăтартса парать. «Культура» колхоз кĕрхи тырăсен вăрлăхне хатĕрлеме тытăнман, авăн çапма молотилкăсене юсаман.

Колхозра ĕç япăххи е лайăххи, чи малтан, колхоз председателĕ мĕнле ĕçленинчен килет. Колхоз руководителĕ фронтпа çĕршыв умĕнчи, колхозниксем умĕнчи ответлăха чĕрепе туйса тăрать пулсан, вăл пур ĕçе те тĕплĕн йĕркелеме тăрăшать, çав ответлăха туймасть пулсан вара — ун пек председательрен ыррине кĕтмелли сахал. Комсомольски районрах çӳлте асăннă «Культура» колхозпа юнашар «Трактор» колхоз пур. Кӳршĕллĕ колхозсен çĕрĕсем те, çыннисем те, лашисем те пĕр пекех, çутçанталăк ырлăхĕсем те вĕсемшĕн пĕр пекех тивĕçеççĕ. Анчах «Трактор» колхозра ĕçсем, «Культура» колхозри пек мар, пачах урăхла. «Трактор» колхоза Т. Иванова юлташ ертсе пырать, вăл чăн-чăн патриотка пек ĕçлет. Кунта çĕртме пуссине пĕтĕмпех тепĕр хут сухаласа тухнă, çĕнĕ тырă çапса вăрлăх хатĕрленĕ те акма тытăннă. Кăçал юхнă вĕри тар килес çул та ăшăтать, теççĕ ваттисем. Çакна туйса, ыранхине курса ĕçлеççĕ те ĕнтĕ çак колхозри колхозниксемпе колхозницăсем!

1945 çулта кĕрхи тырăсене тухăçлăн туса илесси çĕртме пуссисене вăхăтра тата лайăх ĕçлесе çемçетнинчен, тислĕк ытларах тăкнинчен, кĕрхи акана тĕплĕн хатĕрленсе çитсе, ăна агротехника кăтартнă лайăх сроксенче туса ирттернинчен килет. Ĕмĕртен çакă паллă: мĕн акатăн, çавна выртатăн. Кахал пуснă çыннăн анине măян пуснă, лайăх акнă тырă — вырма та ырă. Иртнĕ çул, сăмахран, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз кĕрхи тулла августăн 8—10-мĕш кунĕсенче, лайăх ĕçлесе, тислĕк тăкса çемçетнĕ çĕр çине акса хăварнă та кăçал гектартан 25—30-шар центнер илнĕ. Ыраш та çавăн пекех лайăх пулнă. Çакна кура, ку районри колхозсем кĕрхи тырăсене, уйрăмах кĕрхи тулла, ирттерех акса хăварма тăрăшаççĕ. Кунти чылай колхозсем кĕракине августăн 20-мĕшĕ тĕлне туса пĕтерме шутлаççĕ.

Кăçал кĕрхи тырăсене августăн 10-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче акса хăвармалла, кĕрхи тулла вара акан малтанхи пилĕк кунĕнче, ирттерех те лайăх ĕçлесе тата удобрени тăкса çемçетнĕ çĕр лаптăкĕсем çине акмалла. Ăшăх сухаланă е çумкурăк пусса илнĕ участоксене акас умĕн 18 сантиметр тарăнăш тепĕр хут сухаласа тухас пулать. Çĕре начар ĕçлесе çемçетнине куратăркачах ниепле те акма юрамасть. Лайăх та тарăн сухаланă участоксене вара, вĕсем çинче çумкурăксем сахал пулсан е тăпра пирченсе ларман пулсан, культиваци туса кăпкалатмалла та хыçран сӳрелемелле.

Çĕртме пуссине акнă тырпулсĕне (викăпа сĕлле тата ыт. те) пухса кĕртессине чылай çĕрте вăраха хăварни сисĕнет. Çакă вăл кĕртыррисене вăхăтра акса хăварма чăрмантарать. Малалла ку ĕçе пĕр кун та тăсмалла мар, урăх тырпулсем йышăннă çĕртме пуссине, вĕсем çинчи тырпула пуçтарса илсе, халех сухаласа сӳрелемелле те акма тытăнмалла.

Ретлĕ ака мĕнле усă панине нумай çул хушшинчи опыт лайăх кăтартса пачĕ. Çавăнпа та партипе правительство колхозсене тырпула сеялкăсемпе акма хушаççĕ. Çакна чылай колхоз руководителĕсем ăнланса илнĕ ĕнтĕ. Сăмахран, Елчĕк районĕнчи колхозсенче паянхи куна пĕтĕмпе 112 сеялка ĕçлет. Ку районри колхозсем пурте кĕракине тухнă, икĕ кун хушшинче 674 гектар акнă. Акас умĕн колхозсем çĕре лайăх кăпкалатса çемçетме тăрăшаççĕ. Çапла, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра пĕтĕм çĕртме пуссине тепĕр хут сухаласа сӳреленĕ. «Пирĕн çĕртме пусси çĕмĕрт пек хура выртать», теççĕ вăтă колхозниксем. Ĕçе кунта тĕрĕс тăваççĕ. Сăмăра пула, кăçал çĕртме участокĕсене чылай çĕрте çумкурăк пусса илнĕ, çавăнпа çĕртмене тепĕр хут сухалани питĕ вырăнлă ĕç пулса тăрать. Ку районри «МОПР», «Комбайн» тата ытти колхозсенче те кĕрхи тырă акмалли çĕре иккĕмĕш хут сухаласа тухнă. Анчах çакăнпа пĕрлех ку районра акас умĕнхи ĕçе хакламан колхозсем те пур. Сăмахран, «Сатурн» колхоз. Унта çĕртме пуссине çумкурăк уйрăмах вăйлăн тапса тухнă, колхоз ăна тепĕр хут сухаласа çемçетме васкамасть. Кун пек колхозсене парти райкомĕпе райисполкомăн вăхăтра курса илмелле, çĕре сухалаттармалла, çемçеттермелле, ахаллĕн ун пек колхозсем пĕтĕм районăн лайăх ĕçне вараласçĕ.

Тырра сеялкăсемпе акнă чухне акмалли нормăна вырнаçтарса лартасси çине, вăрлăха тăпрапа вăхăтлă тарăн витĕнтерсе хăвармалла тăвасси çине уйрăмах тимлĕн çавăрăнса пăхас пулать. Кĕракинче сеялкăсемпе мĕнле те пулин туллинрех усă курас тесе, акакансемпе лашасене ятарласа суйласа уйăрмалла. Лашасем лайăх туртсан, сеялка тикĕс пырать, тырă тĕрĕс акăнать, çавăнпа сеялкăна кӳлекен лашасене лайăх пăхмалла.

Ĕçлесе çемçетнĕ çĕре хыçалтан аксах пымалла тăвас пулать. Анчах нумай колхозсенче вăрлăх çапса хатĕрлессине, ăна сортласа тасататассине, имçамсемпе чӳхессине, унăн шăтас пахалăхне лабораторисенче тĕрĕслессине кирлĕ пек организацилемен-ха. Кондицие ларман е тĕрĕслемен вăрлăх акма партипе правительство пачах та чараççĕ.

Пирĕн колхозсенче сортлă вăрлăхсем акма çителĕклĕ майсем пур. Çав майсемпе усă курма пĕлмелле, сортлă кĕртыррисене вăхăтра вырса çапмалла, çапнă тырра Госсортфонд пункчĕсене çийĕнчех леçсе памалла. Колхозсенче сортлă тырпул акас ĕçе малалла сарса пырас тĕлĕшпе Госсортфондăн районсенчи вăрлăх хуçалăхĕсем тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсен çулталăкри тимлĕ ĕçĕ сая ан кайтăр тесен, хăйсем туса илнĕ сортлă вăрлăхсене хăвăртрах колхозсене çитерме тăрăшмалла. Халлĕхе ку ĕç кая юлни сисĕнет. Госсортфонд урлă сортлă вăрлăхсем улăштарса илмелли плана вăхăтра та пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртес пулать.

Килес çул валли вăрлăх участокĕсем уйăрса хăварас ĕçе районри организацисен, уйрăмах çĕрĕç пайĕпе унăн агрономĕсен, тимлĕн контроллесе тăмалла. Çав участоксене 1944 çулта кĕрхи тырăсем акмалли хирте лайăх сухаласа, удобрени хывса çемçетнĕ вырăнсенче уйăрса хăвармалла, вĕсене шалчасем лартса палăртмалла, акасса вара кĕракин малтанхи кунĕсенчех акас пулать.

Пахалăх — ĕçĕн илемĕ. Кĕраки пахалăхĕ çине тимлĕн çавăрăнса пăхас пулать. Пĕр-пĕр колхозник акара шăйрăк хăварать, тикĕс мар акать пулсан, вăл пĕтĕм колхозниксен ĕçне варалать, колхоза, çавăн пекех пĕтĕм çĕршыва та сиен кӳрет. Колхозсенче куллен акнă çĕр лаптăкĕсене колхозниксенчен — бригадирсем, бригадирсенчен вара — колхоз председателĕ пахалăх инспекторĕпе пĕрле йышăнса тăма тивĕçлĕ.

Кĕраки ялхуçалăхĕнчи ытти пысăк та хĕрӳллĕ ĕçсемпе пĕр вăхăтра иртсе пырать. Кунта колхоз председателĕсемпе бригадирсем ĕçе организацилеме пĕлни, фронтри пекех маневр тума пултарни кирлĕ. Кĕракинче пысăк ушкăнсемпе талкишĕпе ĕçлени пулмалла мар. Кашни сухаçăна, акакана уйрăм участоксем уйăрса парас пулать, кашнин ĕçне уйрăмăн шута илсе пымалла. Туртăм вăйĕ тĕлĕшпе ĕç ан такăнтăр тесен, çак тапхăрта уйхир ĕçĕсенче усă курма колхозсемпе колхозниксен ĕнисене, вăкăрĕсене ĕçе явăçтарас пулать.

Çапла мĕнпур майсемпе усă курса, пĕтĕм вăя мобилизацилесе, социализмлă ăмăртăва анлăрах сарса, агротехникăна çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пырса, кĕракине пур енĕпе те кăтартуллăн туса ирттерер. Килес çулхи вăйлă тырпул никĕсне шанчăклăн хывса хăварар. Çакă вăл питех те ответлă фронтра — тырпул фронтĕнче çĕршыв лартнă чыслă задачăна пурнăçа кĕртни пулать.

Ирĕке кăларнă Львовра

Львов хулипе облаçне ирĕке кăларсах вĕсене юсаса ура çине тăратас ĕç пуçланнă.

Предприятисемпе хула хуçалăхне юсаса ура çине тăратас ĕçре халăх активлăн хутшăнса ĕçлет. Тир-сăран завочĕн пĕр пайне юсаса хута янă ĕнтĕ. Халĕ водопровода юсаççĕ, темиçе кунтан хулари çынсем шыв илме тытăнĕç. Автоматлă телефон станцийĕ темиçе пин телефона çыхăнтарнă ĕнтĕ. Трамвай рельсĕсемпе электричество пралукĕсене юсаççĕ. Çăкăр пĕçерекен 18 заводпа пекарня ĕçлеме пуçланă.

Ялсенче ирĕке кăларнă халăхпа вырăнти совет органĕсен тĕп задачи — тырпул пухса кĕртесси пулса тăрать. Сăмахран, нимĕç помещикĕсен пулнă экономисенче 150 пин гектар тырă вырмалла пулать. Помещиксем хăйсем тытса илнĕ çĕр çине хресченсене хăвала-хăвала пухнă та вĕсене çав çĕре сухаласа актарнă.

Нимĕçсем оккупациленĕренпе Львов облаçĕнчи ялсем йăлтах чухăнланса юлнă. Виçĕ çул хушшинче Львов облаçне пĕр пĕрчĕ тавар та турттарса пыман. Çак кунсенче потребитель кооперацийĕ ялсене пĕрремĕш ушкăн тавар янă: тăвар, спичка, супăнь, хуçалăхра кирлĕ япаласем. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 10-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 10-мĕшĕнче пирĕн çарсем РЕЗЕКНЕ (РЕЖИЦА) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ, вăл шутра — АРКАЛНЫ, АИЗКУЯ, АУГУЛИ, ГРЕТАНЫ, ЖИВЕНЕС, ЯУНЗЕМИ ятлă пысăк ялсем тата ДЗЕЛЗАВА ятлă чугун çул станцийĕ.

КРУСТПИЛС хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Латви ССР-ĕн уезд центрне ЕКАБПИЛС хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 60 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — БИРЖИ, МИТЕЛАНЫ, ВИЕСИТЕ, БРАНГАЛИ, СКРУЖИ, РОЦЕНЫ, АПАЛИ ятлă пысăк ялсем тата ДАУГАВА, АЛДАУНЭ, ВИЖСИТЕ, ВАРНАВА ятлă чугун çул станцийĕсем.

КАУНАС хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çапăçса малалла кайнă, Литва ССР-ĕн уезд центрне РАСЕЙНЯЙ (РОССИЕНЫ) хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — КАТУГИНЫ, ЛОПУНИШКИ, ПОМИТУВЕ, РАУДАНЫ, БЛАГОСЛАВЕНСТВО, МИСУРКА, АШМУЦЕ, ВАЛЮЛЕ ятлă пысăк ялсем.

МАРИАМПОЛЬ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен атакисене сире-сире янă, нимĕçсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату кӳнĕ.

БЕЛОСТОК хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем НАРЕВ шывĕ урлă каçнă та, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра—БАНЕВО, КОВАЛЕВЩИЗНА, СТАРАЯ ЛУПЯНКА, НОВАЯ ЛУПЯНКА, ЯБЛОНОВО, ЛЯХЫ, ДРОНГИ, ЗДРОДЫ ятлă пысăк ялсем тата РОТИБОРЫ НОВЫЕ, СОКОЛЫ ятлă чугун çул станцийĕсем.

СЕДЛЕЦ хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — СТЕРДЫНЬ, ЖЕЛЕЗЬНИКИ, ЛИВ, ЧЕРВОНКА, СКАЖИН, ЧАРНОГЛУВ, СТАНИСЛАВОВ ятлă пысăк ялсем.

САНДОМИР хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен контратакисене сире-сире янă, ВИСЛА шывĕн сулахай енчи плацдарма аслăлатасшăн çапăçнă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ПЕНЧИНЫ, ГОЙЦУВ, БРАТКУВ, МОДЛИБОЖИЦЕ, ИВАНИСКА, БАЦЬКОВИЦЕ, ПЮРКУВ, ЛАГУВ, САДКУВ, РАДОСТУВ, РАКУВ, ХАНЬЧА ятлă пысăк ялсем тата ВОЛЯ МАЛКОВСКА, РАКОВКИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ДРОГОБЫЧ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере тата инженери чăрмавĕсене çĕмĕре-çĕмĕре, Карпат тăвĕсем умĕнче çапăçса малалла кайнă. Дрогобыч облаçĕнчи район центрне ПОДБУЖ ялне туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ЛИСКОВАТЕ, КРОСЦЕНКО, ВОЛОШИНОВО, ДАВРОВ, ТОПОЛЬНИЦА, ТУЖЕ, ЛАСТУВКИ, ЯСИОНКА МАСИОВА ятлă пысăк ялсем тата КРОСЦЕНКО, ТОПОЛЬНИЦА ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Августăн 9-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 199 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 61 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Крустпилс хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пĕр соединени чаçĕсем вăрманлă-шурлăхлă вырăнти йывăр условисенче кĕрешсе, 15 километр малалла кайнă та Екабпилс хулине туртса илнĕ. Трофейсем тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Пĕр участокра пирĕн чаçсем çĕрле тăшмана çавăрса илмелли маневр тунă та нимĕçсен пĕр ушкăнĕн каялла чакмалли çулне татнă. Çав тери хăвăрт пырса çапса, тăшмана Хĕвеланăç Двина шывĕ çумне хĕстерсе лартнă та пĕтĕмпех пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем шывра нумай путса вилнĕ.

* ☆ *

Каунас (Ковно) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн танковăй чаçсемпе пехота чаçĕсем Расейняй хулин кăнтăр хĕррине пырса кĕнĕ. Пирĕн ытти чаçсем çак хулана хĕвелтухăç енчен вăркăнса кĕрсе кайнă. Тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсем, артиллерипе авиаци пулăшнипе, темиçе хутчен те контратака тунă, анчах та нимĕнле çитĕнӳ те тăвайман. Урамсенче темиçе сехет хушши çапăçнă хыççăн совет çарĕсем шоссе çулĕсен паха узелне Расейняй хулине туртса илнĕ. Нимĕçсен 10 танкне, 3 артиллери батарейине, минометсен 4 батарейине пĕтерсе тăкнă. Трофейсем нумай тытса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ.

* ☆ *

Мариамполь хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман контратакисене сире-сире тăнă. Тăшман танкĕсен, хăй тĕллĕн çӳрекен тупписен тата пехотин пысăк ушкăнĕсем, авиаци хӳтĕлесе пынипе, пирĕн позицисене кунĕпех штурмланă. Совет чаçĕсем, вăйлăн персе тăрса, тăшмана кашнинчех каялла хăвала-хăвала янă, нимĕçсене йывăр çухату кӳнĕ. Пĕр участокра пирĕн разведка тăшман çарĕсем пĕр çĕре пухăнса тăнине вăхăтра асăрханă. Нимĕçсем атака пуçласа ярсан, совет танкисчĕсем вара çав çарсене сасартăк пырса çапнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе çĕр виллиыртса юлнă, çунса кайнă темиçе вунă танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупписем тăрса юлнă. Гитлеровецсен ирĕксĕрех каялла чакма лекнĕ. Пирĕн çарсем кун каçиччен 1.700 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, 100 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен туппа çити çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ, 7 бронетранспортерпа 140 автомашинăна çĕмĕрсе тăкнă.

Пирĕн авиаци сывлăшра ăнăçлăн çапăçнă, тăшманăн çĕр çинчи çарĕсене пыра-пыра çапнă. Нимĕçсен 24 самолетне персе ӳкернĕ.

* ☆ *

Белосток хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем вăйлă çапăçнă хыççăн тăшманăн Нарев шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи оборонине татнă та, наступление вăйлатса ярса, 15 километр таран малалла кайнă. Совет чаçĕсем пыра-пыра çапнипе каялла чакакан нимĕçсем çулсем çине минăсем лартса хăвараççĕ, кĕперсене сирпĕнтере-сирпĕнтере яраççĕ. Пирĕн пехотăпа артиллерин çăмăллăн куçса пыракан отрячĕсем тăшмана хыçранах хăваласа пыраççĕ, хушăри позицисем çинче çирĕпленсе тăма памаççĕ. Пĕр соединени чаçĕсем виçĕ кун хушшинче нимĕçсен 73 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çунтарса янă, е персе çĕмĕрнĕ. Çав вăхăт хушшинче тăшманăн 4.400 салтакĕпе офицерĕ пĕтнĕ. Пирĕннисем 2 паровоз, çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 62 вагон, паровозсен запас чаçĕсен пысăк складне тата хĕçпăшалпа боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* ☆ *

Сандомир хулинчен хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чаçĕсем çапăçса 10 километр малалла кайнă, нимĕçсен тĕреклетнĕ темиçе пунктне туртса илнĕ. 1.000 гитлеровеца вĕлерсе пĕтернĕ, тăшманăн 15 танкне çунтарса янă. 400 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Совет çарĕсем Сандомир хулине кăнтăр енчен тата хĕвеланăç енчен çавăрса илнĕ, халĕ тăшман оборонин çав вăйлă çирĕплетнĕ пункчĕ патне пымалли вырăнсенче çапăçаççĕ. Пирĕн танксемпе кĕрешекен артиллери тăшманăн ултă контратакине сирсе янă, нимĕçсен 18 танкне пĕтерсе тăкнă.

* ☆ *

Августăн 9-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн торпедăсем пăрахакан самолечĕ (летчикĕ Меркулов капитан), торпеда пăрахса, Финн заливĕнче тăшманăн 8.000 тонна таякан суднине шыва путарнă.

* ☆ *

Карпат тăвĕсем умĕнчи районсенче кĕрешекен совет çарĕсем юлашки вăхăтра Венгри çарĕсене йывăр поражени кӳнĕ, вĕсен салтакĕсене тыткăна нумай илнĕ. Венгри салтакĕсемпе офицерĕсен нумай ушкăнĕсем Хĕрлĕ Çар енне хăйсемех куçнă. Венгерсен 18-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 49-мĕш полкăн 6-мĕш ротин хăй ирĕкĕпе тыткăна парăннă командирĕ Янош Имре лейтенант çапла каласа панă: «Юлашки çапăçусенче эпир пысăк çухату тӳсрĕмĕр. Хамăрăн тăван çĕршыва Венгрие оккупациленĕ нимĕçсемшĕн эпĕ хамăн ротăн юлашки салтакĕсене пĕтерме килĕшмерĕм. Вара, эпĕ хушнă тăрăх, 54 салтак алăри хĕçпăшала пăрахрĕç те тыткăна парăнчĕç. Ман приказсене нихăшне те ку таранччен çавăн пек хĕпĕртесе пурнăçа кĕртменччĕ-ха».

Венгерсен 10-мĕш пехотнăй полкĕн 1-мĕш батальонĕнчен тыткăна лекнĕ сержант Лайош Кадар çапла каласа кăтартнă: «Вырăссем хĕссе пынипе каялла чакнă чухне эпир сасартăк 10 красноармееца тĕл пултăмăр. Старши лейтенант Юхас хушнă тăрăх, 300 çынтан тăракан пĕтĕм батальон 10 совет салтакне тыткăна парăнчĕ».

Венгерсен 11-мĕш пехотнăй полкĕнчи обозран тыткăна лекнĕ сержант Петер Хантоши çапла каласа панă: «Вырăссен икĕ танкĕ пирĕн обоза хăваласа çитрĕç. Вырăссен танкист-офицерĕ пире тыткăна парăнма хушрĕ. Пирĕн обозра 300 çын ытлаччĕ, вара çав обоз унăн командирĕпе Бихари старши лейтенантпа пĕрле пĕр пемесĕр тыткăна парăнчĕ. Эпир вырăссене çар хатĕрĕсем тиенĕ 300 лав парăмăр».

Çавăн пекех тыткăна венгерсен 26-мĕш полкĕн 3-мĕш роти те пĕтĕмĕшпех парăннă. Çав рота пĕр çӳллĕ вырăнта позицисем йышăнса тăнă. Пĕр ушкăн совет боецĕсем çывхарса килнине курсан, кĕçĕн лейтенант Тибор Канц шурă флаг тухса çакма хушнă. Венгерсен 90 салтакĕ çапла тыткăна парăннă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕнче преступленисем тунăшăн судпа айăпласа наказани панă поляксене каçарасси çинчен

Хĕрлĕ Çарпа Польша Çарĕн чаçĕсем çĕнтерӳллĕн Польша территорине кĕрсе кайнине паллă тăвас тесе (çав çарсем Польша территорине кĕрсе кайни поляк халăхне фашистла нимĕç пусмăрĕнчен хăтарас ĕçе пуçласа ячĕ), Совет Союзĕнче преступленисем тунăшăн судпа айăпласа наказани панă поляк гражданĕсене пурне те каçарас, уйрăмах пысăк преступленисем тунисене çеç (шпионла, бандитла ĕçсем тунисене тата çынсене вĕлернисене) каçарас мар.

Çак Указ малта кăтартнă преступленисемшĕн айăпланакан поляксен ĕçĕсем тĕлĕшпе, çак Указа кăларнă тĕле следствипе суд органĕсен аллинче тăнăскерсем тĕлĕшпе законлă пулмалла тăвас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1944 çулхи августăн 10-мĕшĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хусан чугун çулĕ çинчи уйрăмах палăрнă работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ «Чăваш Коммунин» 157-мĕш номерĕнче).

35. Петр Иванович **Иванова** — Вăрмар станцин начальникне.
36. Борис Иванович **Игнатьева** — Канаш станци деповĕн машинистне.
37. Данил Игнатьевич **Игнатьева** — Канаш станци деповĕн машинистне.
38. Пелагея Петровна **Караваевăна** — Канаш дистанцийĕнчи сигнализаципе çыхăну телефонисткине.
39. Владимир Иванович **Каяшева** — Вăрнар станцин дежурнăйне.
40. Павел Кириллович **Кириллова** — Вăрмар станцин старши стрелочникне.
41. Иван Иванович **Китайкина** — çулăн 14-мĕш дистанцийĕнчи ремонт колоннин бригадирне.
42. Илья Иванович **Коваленкăна** — Канаш узелĕнчи парти комитечĕн секретарьне.
43. Сергей Александрович **Козлова** — Канаш станцийĕн деповĕнчи парти бюровĕн секретарьне.
44. Степан Иванович **Корытина** — Канаш станцийĕн дежурнăйне.
45. Георгий Иванович **Крестникова** — Канаш станцийĕнчи депон машинистне.
46. Павел Александрович **Кудрона** — Улатăр станцийĕнчи телеграф начальникне.
47. Ахмед Наджинович **Крымские**—Канаш станцийĕнчи ОРС отделенийĕн начальникне.
48. Сергей Семенович **Кувина** — Улатăрти кондукторсен резервĕн главнăй кондукторне.
49. Римма Михайловна **Кузьминана** — Канаш станцийĕнчи 6-мĕш врач участокĕн начальникне.
50. Иван Кузьмич **Куприянова** — Улатăр станцийĕнчи поездсене пĕрлештерекене.
51. Лидия Александровна **Курманинăна**— Канаш станцийĕнчи таварсен старши кассирне.
52. Михаил Степанович **Курочкина** — Улатăр станцийĕчи кондукторсен резервĕн заведующине.
53. Иван Евдокимович **Майорова** — Атрать разъезчĕн стрелочникне.
54. Иван Дмитриевич **Макарова** — чугун çул службин 14-мĕш дистанцийĕн начальникне.
55. Ирина Максимовна **Максимовăна** — Вăрмар станцийĕн работницине.
56. Егор Федорович **Марченкова** — Улатăр станцийĕнчи пушар сыхлавĕн хурал начальникне.
57. Анна Михайловна **Михайловăна** — чугун çулăн 17-мĕш дистанцийĕн 1-мĕш околотокĕнчи старши рабочие.
58. Барвара Ксенофонтова **Нечаевăна**— ОРС-ăн Канашри отделенийĕнчи пекарьсен бригадирне.
59. Владимир Никитич **Никитина** — чугун çулăн 5-мĕш дистанцийĕн 5-мĕш околотокĕнчи çул обходчикне.
60. Иван Никитич **Никитина** — Канаш станцийĕнчи топливо склачĕн рабочине.
61. Евдокия Николаевна **Николаевăна**— чугун çулăн 14-мĕш дистанцийĕн 7-мĕш околотокĕнчи работницăна.
62. Петр Никонорович **Никонорова** — Канашри резервăн главнăй кондукторне.
63. Георгий Васильевич **Новокрещенова** — Улатăр станцийĕнчи депо машинистне.
64. Андрей Кириллович **Орлова** — Тĕрлеме станцийĕн начальникне.
65. Варвара Григорьевна **Осиповăна** — Улатăр станцийĕн грузчикне.
66. Иван Михайлович **Охрамова** — Тĕрлеме станцийĕн старши стрелочникне.
67. Гаврил Павлович **Павлова** — Канаш станцийĕнчи вагонсен осмотрщикне.
68. Александра Павловна **Павловăна** — чугун çулăн 5-мĕш дистанцийĕн работницине.
69. Ананий Петрович **Петрова** — Шупашкар станцийĕн сцепщикне.
70. Татьяна Павловна **Петровăна** — Канаш станцийĕнчи топливо склачĕн работницине.
71. Андрей Платонович **Платонова** — Канаш станцийĕн технически осмотр пунктĕнчи осмотрщик-автоматчика.
72. Владимир Сергеевич **Пожарские** — чугун çулăн 14-мĕш дистанцийĕнчи кĕпер мастерне.
73. Семен Петрович **Потапова** — Çĕмĕрле станцийĕн дежурнăйне.
74. Василий Иванович **Привезенцева** — 1-мĕш номер Учдорстройăн кровельщик-жестянщикне.
75. Игнатий Прокопьевич **Прокопьева**— Канаш станцийĕн тавар картинчи грузчика.
76. Николай Михайлович **Прохорова** — Улатăр станцийĕнчи вагонсен старши осмотрщикне.
77. Григорий Романович **Романова** — Канаш станцийĕн старши стрелочникне.
78. Иван Иванович **Рощина** — Улатăр деповĕн котельщикне.
79. Иван Егорович **Рыжакова** — сигналсемпе çыхăнăвăн Канаш дистанцийĕнчи электромеханика.
80. Федор Семенович **Сафроночева** — Улатăр станцийĕнчи паровоз хуçалăхĕн строителĕсен ушкăнĕнчи кăмакасем тăвакана.
81. Андрей Иванович **Светозерские** — Канаш станцийĕн 5-мĕш дистанци начальникне.
82. Мария Сергеевна **Сергеевăна** — 1-мĕш номер Учдорстрой платникне.
83. Екатерина Сергеевна **Сергеевăна** — чугун çул службин 5-мĕш дистанцийĕн çул обходчикне.
84. Федор Сидорович **Сидорова**—Канаш станцийĕн старши стрелочникне.
85. Павел Алексеевич **Симонова** — Канаш станцийĕнчи депо начальникĕн заместительне.
86. Анна Павловна **Смирновăна** — Çĕмĕрле станцийĕн старши стрелочникне.

(Юлашки пулать).

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Промкомбинатсемпе апат-çимĕç комбиначĕсен, промысла коопераципе инвалидсен кооперации артелĕсен ăмăртăвĕн 1944 çулхи июль уйăхĕнчи итогĕсем çинчен

Чăваш АССР Совнаркомĕ промкомбинатсемпе апат-çимĕç комбиначĕсен тата промысла коопераципе инвалидсен кооперации артелĕсен социализмлă ăмăртăвĕн 1944 çулхи июль уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачĕн хуласемпе районсенчи промкомбиначĕсен ăмăртăвĕнче, июль уйăхĕн итогĕсем тăрăх, Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне тата пĕрремĕш премие илме тивĕçлисем пулманнине палăртнă. Ăмăртура мала тухнă Тăвайри промкомбината (управляющийĕ Игнатьев юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Широв юлташ) ĕçре палăрнă работниксене премилеме тата вĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма 5000 тенкĕ премi памалла тунă.

Июль уйăхĕнче Улатăрти, Вăрнарти, Куславккари, Сĕнтĕрвăрринчи, Сĕнтĕрти, Шупашкарти, Яндашевăри промкомбинатсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Апат-çимĕç Халăх Комиссариачĕн комбиначĕсен ăмăртăвĕнче Çĕмĕрлери апат-çимĕç комбиначĕ (директорĕ Сиротта юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Подклетнов юлташ) мала тухнă. Вăл июль уйăхĕнчи плана 258,5 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне июль уйăхĕнчи итогсем тăрăх **Çĕмĕрле районĕнчи** апат-çимĕç комбинатĕнчех хăвармалла тунă тата ĕçре палăрнă работниксене премилеме ăна 8000 тенкĕ премi панă.

Июль уйăхĕнче Канаш, Улатăр хулисенчи, Кувакино, Улатăр, Хĕрлĕ Чутай, Шăхасан районĕсенчи апат-çимĕç комбиначĕсем лайăх ĕçленине палăртнă. Вĕсем уйăхри плана ирттерсе тултарнă.

Промысла кооперации артелĕсен ăмăртăвĕнче Шупашкарти «Пекарь» артель (председателĕ Петров юлташ, Шупашкар хула совет исполкомĕн председателĕ Ачикин юлташ) мала тухнă. Вăл июль уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци тата куллен кирлĕ таварсем енĕпе 206,5 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне июль уйăхĕнчи итогсем тăрăх «Пекарь» артельтех хăвармалла тунă тата ĕçре палăрнă работниксене премилеме ăна 8.000 тенкĕ укçа панă.

Сĕнтĕрвăрринчи «Портной» артеле, июль уйăхĕнчи плана ирттерсе тултарнăскерне, ĕçре палăрнă работниксене премилеме 4000 тенкĕ укçа панă.

Июль уйăхĕнче Йĕпреçри «Красный строитель», Шупашкарти «Красный мебельщик», Вăрмарти Осипенко ячĕпе тăракан тата Шупашкар районĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Инвалидсен кооперации артелĕсен ăмăртăвĕнче Вăрнарти «Трудовик» артель (председателĕ Молчанов юлташ, райсовет исполкомĕн председателĕ Осипов юлташ) мала тухнă. Вăл июль уйăхĕнчи плана пĕтĕм продукци туса кăларас енĕпе 113,8 процент, куллен кирлĕ таварсем туса кăларас енĕпе 110,5 процент тултарнă. Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне июль уйăхĕнчи итогсем тăрăх «Трудовик» артельтех хăвармалла тунă тата ĕçре палăрнă работниксене премилеме ăна 15.000 тенкĕ укçа панă.

Калинино районĕнчи Шĕнерти «20 лет Чувашии» артеле, июль уйăхĕнчи плана ирттерсе тултарнăскерне, ĕçре палăрнă работниксене премилеме 10.000 тенкĕ укçа панă.

Июль уйăхĕнче Ишлей районĕнчи «Красный стрелок», Канашри «Красный воин» тата Улатăрти «Союз инвалидов» артельсем лайăх ĕçленине палăртнă.

Лайăх акнă тырă—вырма та ырă

Агротехника кăтартăвĕсене çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пырса, кĕрхи тырăсене кăтартуллăн акса хăварар!

Сĕнтĕрсем тырă вырма васкамаççĕ

СЕНТЕР, августăн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем паянхи кун тĕлне 3.725 гектар çинчи ыраша çеç вырса пуснă. Çуртырлисене те пуçса çитнĕ, анчах вĕсене вырма тытăнман. Ыраш вырас ĕç вăрăма тăсăлни вырма кая юлса тытăннинчен килет. Чылай колхозсем август уйăхĕччен: ыраш симĕс-ха, пуçса çитмен, тесе вырма тухмасăр тăнă. Район руководителĕсем те çак шухăшпа килĕшнĕ, васкаман.

«Çĕнĕ Чемей» колхоз çумăрлă кунсем хыççăн 4-мĕш кун вырать, анчах та çак вăхăтра пурĕ те 9 гектар кăна вырнă. Колхоз председателĕ Герасимов юлташ паянхи кун та:

— Пирĕн ыраш халĕ те пиçсе çитменха, — тесе ларать.

Çавăн пек шухăшпа «Çĕнĕ Чемей» колхозра кăна мар, ытти колхозсене те пур. Ыраш вырасси районра хăвăр пынине çак тĕслĕх те кăтартса парать: августăн 8-мĕшĕнче районĕпе 300 гектар, 9-мĕшĕнче 600 гектар кăна вырнă.

Колхозсенче машинăсемпе пачах усă курмаççĕ, çавăсемпе те ĕçлемеççĕ. «Хĕрлĕ пăтăр» колхозра икĕ жнейка пур, вĕсем ĕçлемеççĕ. Запасри жнейкăсемпе вăхăтра тăтарлемен. «Заря» колхоз председателĕ Ягодкин юлташ тырпул пухса кĕме хатĕрленнĕ тухнă жнейкăна юсарăмăр тесе сводка панă, анчах та машини паян кунта та ĕçлемест. «Новый путь» колхоз председателĕн: машинăсемпе 4—5 гектар вырмалла, та машина каймасть, — тесе ларать. Молотов ячĕпе тăракан колхозра та икĕ жнейка пур, анчах вĕсемпе усă курмаççĕ. «Пирĕн ĕçлекенсем сахал, çавăн пирки машинăпа вырмастпăр», тет колхоз председателĕ Никифоров юлташ. Тĕлĕнмелле! Никифоров шучĕпе вара çын нумай пулсан кăна машинăпа вырмалла иккен.

Кунта халĕ те 14 гектар кăна вырнă.

Тепĕр пысăк ситменлĕх вăл — колхозсенче уйрăм сдельщинăна ĕçлеменни. «1905 год» колхоз ыраш вырса пĕтерет, анчах та çак малта пыракан колхозра та пурте пĕрле ĕçлеççĕ, кам мĕн ĕçленине никам та шута илмест. «Родина» колхозра вара кашни колхозника 4-шар метр виçсе панă та, колхозниксем хăйсен пайне вăхăтра вырса пĕтереççĕ. Кунта ĕçĕн пахалăхĕ те начар. Кашни тăваткăл метртах 20—25 пучах вырăнта юлать. Ку колхозра ытла та кулăшла ĕçсем пулса иртеççĕ. Колхозниксене вăл апат илсе пĕçереççĕ те уя илсе тухаççĕ, анчах та апатне валеçсе панă хыççăн колхозниксем çиме яла таврăнаççĕ. Колхоз председателĕ Дубеев юлташ çакна курать. Анчах та ĕçе йĕркелес тесе нимĕн те тумасть. Тăхăвсемпе ĕçленĕ ĕç те районра çителĕксĕр пулса пырать. Чкалов ячĕпе тăракан колхозра тăкăнса юлнă пучахсене пухса уя хурсене хăвалаççĕ. Пĕр колхозра та пучах пухма шкул ачисемпе пионерсене явăçтарман. Районри пĕр колхоз та аван çапма тытăнман. Иртнĕ çул ыраш çапса пĕтернĕ «Хлебороб» колхоз çеç тырăсене çапма тытăнса пынă.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕç районра начар пырать пулсан та, çак ĕçе йĕркелесе ярас тĕлĕшпе нимĕнле мерăсем те йышăнмаççĕ-ха. Государствăна тырă леçмелли графике район тултарса пыраймасть. Августăн 5 кунĕ хушшинче районĕпе тырă леçмелли графике пурĕ те 13 процент кăна тултарнă.

Колхозсенче массăллă-ăнлантарулла ĕç начар тăрать. Вăрнарсем чĕнсе каланине нумай колхозсенче пĕлмеççĕ.

Т. ИВАНОВ. (Хамăр корр.).

Пур ĕçе те ĕлкĕрсе пыраççĕ

Вăрмар районĕнчи «Красная Кубня» колхоз тырпул пухса кĕртме лайăх хатĕрленсе тухрĕ. Ыраш вырма тытăнни малтанах кунтах пысăк усă курать. Уйра ĕçлекенсене уйрăм апат пĕçерсе параççĕ. Çурлапа выракансене, пучах пухакансене кирлĕ пек тăрăшса ĕçлеççĕ. Çурлапа выракан И. Евдокимова, Максимова, Молостовкина юлташсем кашни кунах 0,15—0,17 гектар выраççĕ. Тырă вырма пуçлас умĕн кĕлĕ тухнисене тытма пуçланă. Тырă вырма тухнă кунран колхоз пахчине те тĕпĕр пулчăнсе тин уйран таврăнаççĕ. Пĕр колхоз тултарман пĕр колхоз та çук. Улта кун хушшинче выраш вырса пĕтернĕ. Ыраш вырма тухсан 3—4 кунран аван çапма тытăнчĕç, ку ĕçе 33 çын уйрăлнă. Çапнă тырра тивĕçлĕ хыççăн государствăна параççĕ. Ку тĕлĕшпе

тарласа 12 лашаран транспорт бригади тунă. Кашни кунах 38 центнер тырă леççĕç.

Халĕ вĕсем тырă парать, государствăна тырă парасси те пахча та ĕçсене ĕлкĕрсе пыраççĕ. Çавăнпа та çак çине эпир тимлĕн пăхатпăр, — тет колхоз председателĕ Сапрыкин юлташ.

Колхоз кĕрхи тулă акма тытăннă. Тулă вăрлăхĕ хатĕр. Сеялкăсем те юсавлă.

«Красная Кубня» колхоз ĕçе хĕрÿллĕ вăхăтра ĕçлесе пырать.

Тырпула пухса кĕрес тата тăкаксăр пухса кĕрес государствăна памалли тырра ĕнерхи мĕн хыççăн пĕр кунлĕх хушса парать. Хĕлĕ тĕлне тĕлĕнмелле тырă пулса илĕпĕр, — теççĕ кол-хозниксем.

Л. РОДИОНОВ.

Хатĕрлев пунктĕнче

КУСЛАВККА, августăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Тĕрлемĕри пунктĕ çĕнĕ тырă йышăнма лайăх хатĕрленнĕ. Хатĕрлев пунктĕнче 13 склада тĕплĕн юсанă, известкăпа шуратнă, склад патне пырса тăрас çулсене те тÿрлетнĕ. Тырă леçме пыракансем валли чей ĕçмелли çурт çуснă, унта пĕр вăхăтра 150 çын апатланма пултарать. Хĕрлĕ кĕтес валли хаçат-журналсем çителĕклĕ, ВКП(б) райкомĕ унта пропагандист пулса ĕçлеме Смирнова юлташа уйăрнă. Çак кунсенчех Хĕрлĕ кĕтесе радио кĕртсе параççĕ.

Пункт тырă йышăнма шанчăклă çынсене уйăрнă, вĕсен шутĕнче Отечественнăй вăрçă инвалидĕ Чернов, Павлов юлташсем пур.

Колхозсен тыррине тĕрĕслесе çĕрте Рыжакова, Ульянова юлташсем лабораторире пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем кăçал 60 сеткăпа курсан ĕçлесе тухнă. Халĕ ĕнтĕ кунта кашни кунах 40—50 лав тырă пырса тăрать. Вĕсене пĕр черетсĕрех йышăнаççĕ.

Н. АНИСИМОВ.

Ÿкерчĕк çинче: Шăхасан районĕнчи «Молодой колхозник» колхозăн председателĕ Т. Н. Иванов юлташ. Вăл — Отечественнăй вăрçă инвалидĕ. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсене хирĕç паттăррăн кĕрешнĕшĕн вăл «За боевые заслуги» медальпе наградăланнă. Иванов юлташ ертсе пынипе колхоз тырпулне малта пырать.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

КĔРХИ ТЫРĂСЕМ АКАÇÇĔ

ЕЛЧĔК, августăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Паян районри пур колхозсем те ыраш акма массăллăн тухрĕç. Нумай колхозсенче малтанхи кунран пуçласах ыраша сеялкăпа акаççĕ. Паянхи кун тĕлне 112 сеялка ĕçлет. «Красный партизан» колхоз 39 гектар, «Красное знамя» колхоз — 40 гектар, «Знамя» колхоз 25 гектар, пурĕ районĕпе 674 гектар акнă.

В. МАРКОВ, Райçĕрçе пайĕн заведующийĕ.

* * *

КОМСОМОЛЬСКОЕ, августăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра малта пыракан колхозсем паян ыраш акма тухрĕç. «Трактор» колхоз (председателĕ Т. Иванов юлташ) иртнĕ çул иртерех акнă участокĕсем çинче гектартан 20—25 центнер ыраш пухса илнĕ, кăçал та ыраш акма пуриччен малтан тухрĕ. Паянхи кун 14 гектар акнă. Красин ячĕпе тăракан колхоз 8 гектар, Шмидт ячĕпе тăракан колхоз 19 гектар акнă. Паянхи кун тĕлне пурĕ районĕпе 152 гектар акнă.

Агроном Е. ИВАНОВА.

* * *

ВĂРМАР, августăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем хĕрсех ыраш акма тытăнчĕç. «Дружба», «Большевик», «Заря» тата ытти колхозсем темиçе вунă гектар акнă.

* * *

ВĂРНАР, августăн 11-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсенче те ыраш акаççĕ. Паянхи кун тĕлне 200 гектар ытла акнă. Ыраш акас ĕçе августăн 20-мĕшĕ тĕлне вĕçлессишĕн кашни колхозрах пикенсе ĕçлеççĕ.

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче

Висла шывĕн леш енче

УКРАИНАРИ 1-МĔШ ФРОНТ, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Поляксем совет çарĕсене мĕн тери тав туса чунтанчĕререн саламланине курас тесен, çак кунсенче чăнах та Польшăра пурăнас пулать.

Висла патне кайнă чухне эпир нумай ялпа хула витĕр тухрăмăр. Пур çĕрте те халăх Хĕрлĕ Çара çав тери юратса кĕтсе илнине куртăмăр. Пирĕн боецсем çине чечексем ывăтаççĕ, вĕсене пĕр-перинчен ăмăртса çырласем çитереççĕ, тăван пичĕсене ыталанă пек ыталаса чуп тăваççĕ. Провинцири лăпкă Ярослав хулин урамĕсенче пурте хĕпĕртенĕ. Темиçе çĕр çын хула варринчи площаде пырса тулнă. Унта поляк влаçĕсем паян «çăлăну праçникĕ» ятлă митинг туса ирттереççĕ.

Жешув хули — пирĕн Львов пекех пысăк хула. Хула çыннисем тротуарсем çине йышлăн тăрса тухнă та иртсе пыракан совет танкĕсене ырă сунса саламлаççĕ. Хула управин çурчĕ çине союзлă державăсен — Польшăн, Совет Союзĕн, Америкăн тата Англин флагĕсене çакаççĕ.

Лежайскра хула варринчи урам урлă «Сталина мухтав» тесе çырнă лозунг карса хунă.

Хула хĕрринче çынсен пĕр ушкăнĕ тыткăна лекнĕ нимĕçсен ушкăнне çавăрса илнĕ, вĕсене пирĕн боецсем хуралласа тыла ăсатаççĕ. Поляксен ушкăнĕнчен гитлеровецсене çиленсе кăшкăрнă сасăсем илтĕнеççĕ.

— Вĕсем пире мĕн тери йăлăхтарнине пĕлĕсĕрччĕ, — тет кăвакарнă çÿçлĕ поляк Витольд Буселевич. — Нимĕçсем оккупациленĕ çак çулсем пире ĕмĕр пек туйăнчĕç.

Ирĕке тухнă Польша ура çине тăрать. Тулли кăкăрпа сывлама пуçлать. Хуласенче магазинсем уçăлаççĕ, предприятисем ĕçлеме пуçлаççĕ.

Рудник местечкинче эпир рабочисемпе служащисем пĕр завода йĕркене кĕртнине куртăмăр. Унта пурне те кирлĕ япаласем тăвас ĕçе пуçарма тăрăшаççĕ.

Висла шывĕ патне вирлĕн пырса тухса Хĕрлĕ Çар поляксем валли Висла шывĕн сылтăм енчи хуласене çăлса хăварчĕ. Сокодув патĕнчи ытла та илемлĕ хыр вăрманĕнче Риббентропăн Польшăри имениййĕсенчен пĕри пулнă. Риббентроп унта темиçе хут та ухатана пынă. Халь çав дача пирĕн çарсен тылĕнче пулса юлчĕ.

Демба местечкинче эпир нимĕçсен калама çук пысăк çар лагерьне куртăмăр. Вăл темиçе тăваткăл километр вырăн йышăнса тăрать. Унта—службăн чул çурчĕсем, офицерсен çурчĕсем, салтак баракĕсем, складсем, гаражсем, витесем. Пирĕн çарсем пĕр çакăнта кăна çар пурлăхĕ, апат-çимĕç тата горючи хунă 30 склада яхăн тытса илнĕ. Офицерсен пĕр çуртне кĕретпĕр. Чÿречесене маскировка тумалли хутпа карса хунă. Сĕтел çинче — каçхи апат юлашкийĕсем. шкапсен алăкĕсене яр уçса пăрахнă, урайĕнче килти япаласем пĕр йĕркесĕр сапаланса выртаççĕ.

— Вĕсене çĕрле тревогăпа пухрĕç, — тесе каласа парать хулари çын Владислав Пшепрек. — Кашни çынни автомашинăна ытларах япала персе чикме тăрăшрĕ. Совет танкĕсем кунта нимĕçсем складсене вут тĕртсе çунтарма хатĕрленнĕ вăхăтра килсе çитрĕç.

Эпир Висла шывĕ çинче тыткăна илнĕ нимĕç салтакĕсене допрос тунă çĕрте пултăмăр. Вĕсем пурте çапла калаççĕ: Германи çарне тепĕр хут кĕтмен çĕртен пырса çапрĕç. Нимĕçсен командованийĕ пирĕн наступление Висла шывĕн сылтăм хĕрринче тытса чарма пулĕ тесе шанса тăнă, çапла туса вăл Висла шывĕн сулахай хĕррине шанчăклăн çирĕплетмешкĕн вăхăт тупма шаннă. Хĕрлĕ Çар ку хутĕнче те тăшман планĕсене арпаштарса ячĕ. Висла çинче Донпа Днепр çинчи ĕçсем тепĕр хут тата вăйлăрах пурнăçа кĕчĕç.

Çапăçусем Висла шывĕн леш енче кĕрлеççĕ.

Г. КРЫЛОВ.

„Франци—СССР“ ятлă ассоциацин Алжирти федерацийĕн съезчĕ

АЛЖИР, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта августăн 6-мĕшĕнче «Франци — СССР» ятлă ассоциацин Алжирти федерацийĕн съезчĕ пулса иртнĕ. Съездра 100 делегат пулнă, вĕсем унта Алжирти федерацин 4.000 членĕ ячĕпе пынă. Генеральнăй секретарĕн заместителĕ Жанэн федераци бюровĕн апрелĕн 18-мĕшĕнчен пуçласа тунă ĕçĕсем çинчен каласа панă (апрелĕн 18-мĕшĕнче çав федераципе урăхла йĕркелесе янă). Жанэн Алжирти федераци членĕсен хисепĕ ÿсни çинчен тата Францире вăрттăн тухакан «Рюсси Д'Ожурдюи» («Паянхи Россия») ятлă журнал çинчен каласа панă, съезда Çурçĕр Африкăра тухса тăракан «Франци — СССР» ятлă журнала сарма пĕтĕм вăйпа тăрăшма чĕннĕ. Юлашкинчен вăл сентябрь уйăхĕнче Алжирта «Франци — СССР» ятлă ассоциацин съезчĕ пулмалли çинчен пĕлтернĕ.

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

Америка çарĕсем Сен-Мало хулипе Нант хулине кĕрсе кайнă

ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

«Ле-Ман хулине ирĕке кăларнă. Союзниксен çарĕсем Анжер хули таврашĕнче, Луара улăхĕнче тăраççĕ. Эпир Нант хули патне çитрĕмĕр, пирĕн колоннăсем Лориан хули патĕнче пĕр-перинпе пĕрлешрĕç. Бретань çурутравĕнче союзниксен çарĕсем халь Сен-Мало хулинче тăраççĕ. Динарта тăшман çарĕсем хаяррăн хирĕç тăраççĕ.

Çурçĕрти çыран хĕрринчи çулпа пырса, союзниксем Марлэ урлă каçнă. Брест хулинче тăшман гарнизонĕ хăйне парăнма хушнипе килĕшмен, халь хула тулашĕнче çапăçаççĕ. Брест çывăхĕнче Германин 266-мĕш пехотнăй дивизийĕн командирне Карл Шпанг генерал-лейтенанта тыткăна илнĕ.

Норманди фронтĕнче пысăк улшăнусемех пулман. Майенн районĕнче патрульсем активлăн кĕрешнĕ. Мортэн хули тăшман аллинче-ха. Çав хуларан çурçĕртерехре тата хĕвеланăçнерехре хаяр çапăçусем пыраççĕ. Гатемо хули патĕнче нимĕçсен контратакине сирсе янă.

Союзниксен çарĕсем, Фалез патнелле куçса пырса, нимĕçсен позицийĕсен 1-мĕшпе 2-мĕш линийĕсем урлă каçнă та Потиньи хули таврашне пырса тухнă. Союзниксен танковăй колоннисем Эстре-ла-Кампань хулипе Суаньоль хули патне çитнĕ. Орн шывĕ хĕрринчи плацдармра кĕрешекен пирĕн çарсем августăн 9-мĕшĕнче тăшманăн çĕнĕ контратакисене сирсе янă, ăна каялла хăваласа янă. Унтан хĕвеланăçнерехре, Монпенсонран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре тата Эстрипе Вир хулисем хушшинче çĕнĕ территори тытса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн çар объекчĕсене темиçе хутчен хаяррăн тапăннă.

Тинĕс çинчи вăйсем тăшман суднисен темиçе караванĕпе çапăçнă, тăшманăн пĕр карапне шыва путарнă, темиçе суднине сиенленĕ».

ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Францире Америка çарĕсем Сен-Мало хулипе Нант хулине кĕрсе кайнă.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Флоренци хулинчен хĕвелтухăçнерехре акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем Понтассиеверен кăнтăртарахри тусем çинче тăшман хирĕç тăракан вырăнсене пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе çапăçнă. Паха çÿллĕ вырăнсене чылайĕшне тăшмантан тасатнă. Çапăçусем çаплах пĕтмен-ха. Фронтăн ытти участокĕсенче, ĕнерхи пекех, патрульсем кăна çапăçнă.

Союзниксен бомбардировочнăй йывăр авиацийĕ ĕнер Дьер хулинчи (Венгри) нефтьрен тĕрлĕ япаласем тăвакан завода, Вечеш тата Текель хулисенчи аэродромсене (Будапешт патĕнче) тапăннă. Союзниксен ытти самолечĕсем Брод хулинчи сортировочнăй чугун çул станцине (Югослави), çапăçусен районĕнчи тата Югославири аэродромсене, кĕперсене тата ытти вăрçă объекчĕсене тапăннă. Иртнĕ çĕр союзниксен бомбардировочнăй авиацийĕ Плоештири (Румыни) вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен халăх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: Сербипе Черногорире тăшмана çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен йывăр çухатусем кÿнĕ. Черногорире Плав хулине туртса илнĕ, Вăтам Боснире Приявор хулине йышăннă.

Лесковац хулинчен хĕвеланăçнерехре Югослави чаçĕсем болгарсен пысăк вăйĕсемпе хаяррăн çапăçаççĕ.

Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен халăх çарĕн чаçĕсем Македонире Югославипе Греци хушшинчи чикĕ урлă каçнă та грек партизанĕсен чаçĕсемпе пĕрле Эдесса (Водена) хулине вăркăнса кĕрсе кайнă. Эдесса хули Грецири çулйĕрсен паха узелĕ тата промышленноçăн пысăк центрĕ пулса тăрать.

Шыв айĕнчи вăрçă мĕнле пыни çинчен Черчилльпе Рузвельт пĕрле пĕлтерни

ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви шыв айĕнчи вăрçă мĕнле пыни çинчен Черчилльпе Рузвельт пĕрле пĕлтернине панă. Çав пĕлтерÿре каланă тăрăх, вăрçă пуçланнăранпа Германин 500 подводнăй лодкине ытла шыва путарнă.

Июль уйăхĕнче тăшманăн путарнă подводнăй лодкисен хисепĕ вĕсем хăйсем путарнă суту-илÿ суднисен хисепĕнчен нумай ытларах пулнă. Союзниксен çарĕсене Çурçĕр Францие илсе пырса антарнăранпа 17 подводнăй лодкăна путарнă, вĕсем союзниксен тинĕс çинчи вăйĕсене Ла-Манш урлă çÿреме чарасшăн пулнă. Тăшманăн шыв айĕнчи флочĕ халĕ те чылай вăйлă-ха. Анчах пур фронтсенче те çав подводнăй лодкăсем суднăсене хăваланинчен ытла вĕсене хăйсене хăвалаççĕ.

Нацистсем хăйсем миçе судно путарни çинчен пĕлтернисем ĕлĕкхи пекех питĕ нумай ÿстерсе пĕлтернĕскерсем пулса тăраççĕ. (ТАСС).

ГЕРМАНИ САМОЛЕЧĔСЕМ ШВЕЙЦАРИ ТЕРРИТОРИНЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бернра официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: Германин Тури Савойя енчен вĕçсе пынă икĕ истребителĕпе пĕр бомбардировщикĕ Швейцарин Франци чикки патĕнчи тусем çинче ларакан пысăках мар Моржен хули çине бомбăсем пăрахнă тата ăна пулеметсемпе пенĕ. Вилнисемпе аманнисем пур, пурлăх тĕлĕшĕнчен те сиен тунă. Çав самолетсем Францпе Швейцари чикки çывăхĕнчи улăхра французсен партизанĕсене хирĕç кĕрешнĕ пуль тесе шутлаççĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ЭСТОНИ ССР-ĕн ХАЛĂХНЕ ИРĔКСĔР ĔÇЛЕТТЕРМЕ ХĂВАЛАСА КАЯÇÇĔ

СТОКГОЛЬМ, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Финсен «Улуси Суоми» ятлă хаçатĕнче Эстонири лару-тăру çинчен çырнă статьяна пичетленĕ. Çав хаçат каланă тăрăх, гитлеровецсен оккупацилле влаçĕсем Эстони халăхне ирĕксĕр ĕçлеттерме, пуринчен ытла—укрепленисем тума хăваласа каяççĕ. Ирĕксĕрле ĕçе мобилизацилессинчен пăрăнма кансĕрлес тесе, гитлеровецсем Эстони халăхне çĕршыв тăрăх çÿреме йăлтах чарса лартнă. Ку çеç те мар, халăха ĕçрен таврăнсан та хăйсен килĕсенчен тухма чарнă.

АНГЛИПЕ АМЕРИКА НЕФТЬ ПИРКИ ТУНĂ КИЛĔШÿ

ВАШИНГТОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). США-н государство департаменчĕ çапла пĕлтернĕ: США ячĕпе Стеттиниус тата Англи ячĕпе Бивербрук августăн 8-мĕшĕнче Англипе Америка нефть пирки тунă килĕшĕве алă пуснă. Çав килĕшÿре «концессисем туянас ĕçре икĕ еншĕн те пĕр пек майсем тумалли» çинчен, çавăн пекех тата «нефть кăларас тата валеçес ĕçре кирлĕ мар чăрмавсене» пĕтермелли çинчен каланă. Малалла çав килĕшÿре нефть комиссийĕ тумалли çинчен каланă, çав комиссире икĕ правительствăн представителĕсем пулмалла.

Государство департаменчĕ çапла калать: çав килĕшÿ икĕ правительство та ăна пурнăçа кĕртме килĕшни çинчен пĕр-пĕрне пĕлтерсенех законлă пулса тăрать, тет.

ПАВЛОВПА КОРНИЛОВА ТĔРМЕРЕН КĂЛАРНĂ

АНКАРА, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Павловпа Корнилова паян тĕрмерен кăларнă. Унта вĕсене, Турци сучĕ йышăннă тăрăх, Гитлер посолне фон Папена «тапăннă» тесе айăпласа хупса лартнăччĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ ГУАМ УТРАВНЕ ПĔТĔМĔШПЕХ ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, августăн 10-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă Океанри флочĕн командованийĕн штабĕ çапла пĕлтернĕ: Америка çарĕсем Гуам утравне пĕтĕмĕшпех йышăннă, хĕвелтухăç çыранĕнче ларакан Пати пункчĕ çывăхĕнчи пĕр пĕчĕк района çеç йышăнайман-ха. Японецсен çавăрса илнĕ çарĕсене майĕпен пĕтерсе пыраççĕ. Японецсем çавăрса илнĕ ункăран тухса тарма хăтланнă, анчах та вĕсен çулне союзниксен Гуам утравĕн çурçĕр çыранĕ патĕнче патрульте çÿрекен суднисем пÿлсе лартнă.

ЯПОНИН ВĂРТТĂН СОВЕЧĔН ПРЕЗИДЕНЧĔ ВИЛНИ

ТОКИО, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 7-мĕшĕнче Японин вăрттăн совечĕн президенчĕ Иосимици Хара вилнĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Промысла кооперацийĕн взаимнăй страховани кассине ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: ĕç сыхлавĕпе хăрушсăрлăх техникин инспекторĕ, старши оргинспектор, бухгалтерсем, ача учрежденийĕсен бухгалтер-ревизорĕ тата врач.

Адрес: гор. Чебоксары, Набережная реки Кайбулки, 21.

Калинино МТС-не çакăн пек работниксем кирлĕ: механик, слесарьсем, токарьсем, тимĕрçĕсем, шофер, бухгалтер, счетовод, секретарь-машинистка, нефтебаза заведующийĕ, сторожсем, хуралçăсем, платниксем. Ĕçукçи—калаçса килĕшнĕ тăрăх.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Калинино, Чувашской АССР, директору МТС.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР
августăн 9-мĕшĕнчен пуçласа
КУНСЕРЕНЕХ
музыкăллă çĕнĕ фильм
«ЖИВИ, РОДНАЯ БЕЛОРУСЬ!»
кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 10, 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсем малтанах илсе хума юрать. Касса ирхине 10 сехетренех ĕçлеме тытăнать.

Пирĕн фронтри земляксем

I. Хăюллă разведчик

Ку ĕç Дон шывĕ çывăхĕнче пулса иртнĕ. Пирĕн разведчиксен ушкăнĕ, нимĕçсен оборони урлă каçсанах, телефон проводне тĕл пулнă. Ун çинчен вĕсем çийĕнчех штаба пĕлтернĕ. Штабран вара нимĕçсен йăвине шыраса тупса пĕтерсе тăкма приказ илнĕ. Разведчиксем приказа пурнăçа кĕртме тытăннă. Разведчиксем, йĕплĕ пралукран тунă картана никама систермесĕр касса кĕрсе, минăсене сиенсĕрлетсе пырса, нимĕçсен блиндажĕ патнелле шунă. Вăхăт нумай иртмен. Нимĕçсен пуçĕ çинелле гранатăсем вăркăннă, темиçе минутăлăха хаяр çапăçу пуçланнă...

Нумай гитлеровецсене леш тĕнчене ăсатнă, икĕ нимĕçе тыткăна илнĕ, — çакăнпа вĕçленнĕ кĕске çапăçу. Пирĕн разведчиксен трофейĕсем шутĕнче винтовкăсем, икĕ ручной пулемет, телефон аппарачĕсем пулнă.

Пирĕн землякăн, Аслă Елчĕк çыннин, Анисифор Осипович Теньковăн вăрçă вăхăтĕнчи пурнăçĕнче нимĕç захватчикĕсемпе çавăн пек тĕлпулнисем нумай пулнă. Вăл хăй кăна тăшманăн 31 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ, темиçе вунă гитлеровеца леш тĕнчене ăсатнă, тăшманăн нумай техникине пĕтерсе тăкнă. Çапăçусенче тăванланнă тусĕсемпе Тряпицы, Мостовой тата ытти юлташĕсемпе пĕрле, Теньков тăшманăн тылĕнче те, нимĕçсен траншейисенче те нумай хутчен пулнă, гитлеровецсемпе штык вĕççĕн те сахал мар тĕлпулса çапăçнă. Анчах мухтавлă разведчиксем çапăçусенчен яланах çĕнтерсе тухнă.

Разведчик. Вăрçăра пулнă çын çак сăмаха лайăх ăнланать. Разведчик чи хăрушă вырăнсенче, нумай чухне вилĕм хăрушлăхĕнчен хăтăлма май çук вырăнсенче те, пулать. Çавăнпа та разведчикăн çапăçу хирĕнчи условисене пăхăнса хăйне тыткалама, хăюлăхпа паттăрлăха тата чăтăмлăхпа пултарулăха чеелĕхне çыхăнтарма, тăшман хăçан мĕнле ирсĕр ĕç тума шутланине тавçăрса илме пĕлмелле. Тăшман çине хăçан мĕнле тапăнасси, хăçан мĕнле хĕçпăшалсемпе усă курасси çинчен те пĕр минутлăха та манма юрамасть.

Пирĕн земляк Анисифор Осипович Теньков çав енĕпе палăрса тăрать те ĕнтĕ. Вăл çавăн пек чун пахалăхĕсемпе туйăмĕсене, пĕтĕм совет çыннисем пекех, ирĕклĕ те телейлĕ пурнăçра, коллективлă пурнăçра гуяннă. Анисифор Теньковна совет влаçĕ пăхса ÿстернĕ. Чухăн çемьере çуралнă Анисифор, пуçламĕш шкултан вĕренсе тухсан, хăйĕн виçĕ тăванĕпе тăлăха тăрса юлнă. Çакăн хыççăн вĕсем Мускавра пурăнаççĕ. Анисифор ĕçлеме кĕрет, унăн шăллĕсене ачасен садне вырнаçтараççĕ. Колхозсем организацилеме тытăнсанах, Анисифор, яла таврăнса, колхоза кĕрет. Вăл совет влаçĕн тивлечĕпе колхозниксен районри шкулĕнче вĕренсе тухать. Колхозра ĕçлесе пуян та культурăллă пурнăç тăвать. Çавăнпа ĕнтĕ вăл хăйне телей панă тăван çĕршыва чĕререн юратать. Нимĕç вăрă-хурахĕсемпе паттăррăн та хăюллăн çапăçнă çĕрте çакă хавхалантарать те ĕнтĕ ăна.

Пирĕн çĕршыв хăйĕн мухтавлă ывăлхĕрĕсене чыслăн хисеплет. Совет правительстви Анисифор Осипович Теньковна нимĕç захватчикĕсене хирĕç çапăçнă çĕрте паттăрлăх кăтартнăшăн темиçе хутчен те орденсемпе медальсем парса наградăланă. Халĕ пирĕн землякăн кăкăрĕ çинче «За отвагу» медаль, икĕ Хĕрлĕ Çăлтăр, Хĕрлĕ Ялав орденĕсем тата «Отличный разведчик» значок йăлкăшса тăраççĕ. Анисифор Теньков Ленин—Сталин партийĕн членне кĕнĕ. Вăл халĕ те, Хĕрлĕ Çар нимĕç захватчикĕсене хăйсен шăтăкĕнчех пĕтерсе тăкма хăваласа пынă чухне, тăван çĕршывăн çĕнтерÿллĕ ялавне хăйĕн паттăр та хăюллă ĕçĕсемпе чысра тытса пырать.

А. ЧЕРНОВ.

II. Гварди майорĕ Макаров

Пирĕн землякăн — Шăхасан районĕнчи Матьшÿ ял çамрăкĕн Геннадий Макаровăн ăмăрткайăкĕ çапăçăва вăрçă пуçланнă кунсенчех çĕкленнĕ. Унтанпа нумай çапăçусенче пулнă вăл. Тăшманăн çар техникине чĕрĕ вăйне сахал мар пĕтерсе тăкнă.

Пĕррехинче Геннадий Макаров нимĕçсен икĕ самолетне персе антарнă. Çавăн хыççăн унăн истребительне нимĕçсен тăватă самолечĕ тапăннă. Макаров çухалса кайман. Вăл хăйĕн истребительне тÿрех тăшман самолечĕ çинелле тытнă. Пулеметпа персе, тăшманăн тепĕр самолетне вут хыптарнă. Çав самантра Макаров истребителĕн моторĕ ĕçлеме чарăннă. Анчах вăл, тĕрлĕ маневрсем туса, истребителе хамăрăн аэродром çине илсе çитернĕ.

Тепĕр çапăçура Макаров йывăр аманнă. Темиçе уйăх госпитальре выртнă. Вăл вара урăх енĕпе вĕренме тухса кайнă.

Кĕске вăхăтрах Макаров старши лейтенант званине илнĕ. Орел хулине ирĕке кăларнă чухне, вăл танковăй соединенири уйрăм разведка отделĕн командирĕ пулса çапăçăва кĕнĕ. Вăл тăракан часть Днепр шывĕ урлă каçнă чух уйрăмăнах палăрнă. Унăн чаçĕнчи боецсем тăшманăн 42 танкне, 187 автомашинине, темиçе оруди, тăшман пехотин пĕр полкне ытла пĕтерсе тăкнă. Пĕр питех те пысăк вырăн йышăнса тăракан высоташăн пынă çапăçура пирĕн земляк Макаров хăй пĕччен нимĕçсен танкне, 47 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

Правительство Геннадий Макаровăн ĕçне пысăка хурса хакларĕ, çапăçусенче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн ăна «Хĕрлĕ Çăлтăр» тата «Хĕрлĕ Ялав» орденĕсемпе наградăларĕ. Унăн çапăçури пултарулăхне кура, Оборонăн Халăх Комиссарĕ Геннадий Макарова çĕнĕ çар званийĕ— Гварди майорĕ ятне панă.

В. ВЕСЕЛОВ

III. Фашистсене вилĕм кĕтет

Фашистла нимĕç захватчикĕсен Крымра тăракан дивизийĕсене хирĕç Хĕрлĕ Çар наступлени пуçласа янă кунсем, çавăнти çапăçусен паттăрĕсем нихăçан та асран тухас çук. Йывăр самантра та, çапăçусем çĕнтерÿллĕн вĕçленнĕ хыççăнхи савăнăçлă тапхăрта та аса килеççĕ вĕсем. Тепĕр чухне вара, пулни-иртнисем çинчен юлташсемпе халлап пуçласан, куç умне Крымри чечекленекен садсем, янкăр кăвак тинĕс хумханса выртни, ишĕлсе пĕтнĕ илемлĕ шурă çуртсем, вилĕм хăрушлăхĕпе хаяррăн кĕрешекен, çĕнтерÿ савăнăçĕпе хĕпĕртекен Хĕрлĕ Çар воинĕсем туха-туха тăраççĕ. Эпĕ вĕсене пĕтĕмпех хамăн куçпа куртăм, хамăн чĕрепе тÿссе ирттертĕм.

... Пĕррехинче пирĕн часть нимĕçсем çирĕплетнĕ вырăна татса кĕчĕ. Нимĕçсем вара хăйсен малтанхи вырăнне йышăнасшăн контратакăна тухрĕç. Пĕр участок çине кăна нимĕçсен 20 ытла танкĕ кĕрсе кайрĕ. Пирĕн артиллеристсем гитлеровецсен пуçĕ çине вут-çулăм тăкма пуçларĕç. Акă пирĕн çапăçура палăрнă старши сержант Ермолаев юлташ орудийĕ те ĕçе хутшăнчĕ.

— Огонь! — команда пачĕ Ермолаев юлташ.

Оруди кĕрлесе, чĕтренсе илчĕ. Çав самантрах малта пыракан «тигр» йышши танка вут хыпрĕ. Унтан вара оруди пĕр вĕçĕмсĕр кĕрлеме пуçларĕ.

Нимĕç танкисчĕсем Ермолаев юлташăн орудине курчĕç пулас. Виçĕ танк сулăхаялла пăрăнчĕç те оруди патнелле çул тытрĕç. Пынă майăн тупăсенчен переççĕ. Пĕр снаряд оруди расчечĕ çывăхнех пырса ÿкрĕ. Расчетри боецсем стройран тухрĕç, пĕр Ермолаев çеç сывă юлчĕ. Вара вăл, пĕтĕм вăйне, пултарулăхне хурса, орудирен пĕчченех персе тăма пуçларĕ. Часах нимĕçсен виçĕ танкне те çулăм ярса илчĕ. Пĕр çур сехет хаяррăн çапăçнă хыççăн нимĕçсен юлашки танкĕсем гарма пуçларĕç.

Çапăçу лăплансан, Ермолаев юлташ хăйĕн боецĕсене госпитале ăсатрĕ те, хăйне пулăшма пынă боецсемпе пĕрле, таракан нимĕçсем хыççăн малалла кайрĕ.

Хĕвеллĕ Крыма ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнă боецсемпе офицерсене тăван çĕршыв пысăка хурса хисеплерĕ, нумай боецсемпе офицерсене ССР Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене парса наградăларĕ. Вĕсем хушшинче паттăр артиллерист старши сержант Мефодий Арсентьевич Ермолаев юлташ та пур. Ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă. Ермолаев юлташ Етĕрне районĕнчи Мăн Йĕкĕт ялĕнче çуралса ÿснĕ.

Нумаях пулмасть часть командирĕ Ермолаев юлташа лейтенантсен курсне вĕренме кайма сĕнчĕ.

— Ну мĕнле, килĕшетĕр-и? — ыйтрĕ часть командирĕ юлашкинчен.

— Вĕренме хирĕç мар, — пĕлтерчĕ Ермолаев. — Анчах манăн фашистсене вĕлермелле. Эпĕ кайсан хăшĕ-перисем хăтăлма пултараççĕ. Çавăнпа та халлĕхе вырăнтах хăварма ыйтатăп.

Часть командирĕ Ермолаевпа килĕшрĕ. Мефодий Арсентьевич Ермолаев орудийĕ халĕ те фашистсене çĕмĕрсе пырать.

Т. ЯРАНДАЙКИН.

ÇАПĂÇУРИ ÇАР.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23

НТ 00631 Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.